Конкурс

# Районти ăста вĕрентекенсем

**Учительсен професси ăсталăхне хаклакан «Çулталăкри учитель – 2010» районти конкурсăн финалĕ апрелĕн 8-мĕшĕнче иртрĕ.**

Çак конкурса малтанхи тапхăртан пуçласа пĕтĕмĕшле 22 учитель, шкулчченхи вĕрентӳ учрежденийĕсенче ĕçлекен 7 педагог, хушма пĕлӳ паракан учрежденисенчи 5 педагог хутшăнчĕ. «Методика семинарĕ», «Вĕрентӳ занятийĕ», «Мастер-класс» тата «Класс сехечĕ» – çаксене пĕтĕмпех вĕрентекенсем конкурсăн пĕрремĕш тапхăрĕнче кăтартса пачĕç. Иккĕмĕш тапхăрта «ала» витĕр тухнă чи лайăх 5 педагог педагогика канашлăвĕсем ирттернĕччĕ.



Çапла вара конкурс çĕнтерӳçисене 3 номинацире палăртрĕç. «Вĕрентекен» номинацире Калайкассинчи вăтам шкулти математика учителĕ Татьяна Аркадьевна Ершова пулса тăчĕ. Ку категоринче Муркашри вăтам шкулти пуçламăш классене вĕрентекен Т.Ю. Крючкова, Москакассинчи вăтам шкулти математика учителĕ Н.И. Иванова, Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулти хими учителĕ С.А. Леонтьева, Çатракассинчи вăтам шкулта историпе обществознани урокĕсене ертсе пыракан Н.Г. Романова дипломсене тивĕçрĕç.

«Хушма пĕлӳ паракан педагог» номинаци çĕнтерӳçи районти çамрăк техниксен станцийĕнче вăй хуракан Ольга Витальевна Семенова пулса тăчĕ. Дипломсемпе районти ачасен пултарулăх çурчĕн педагогĕсене Т.В. Ермакована тата В.Б. Петрована чысларĕç.

«Шкулчченхи вĕрентӳ учрежденийĕн педагогĕ» номинацире «Малыш» ача сачĕн учитель-логопечĕ Валентина Валериановна Гусева çĕнтерӳçĕ ятне илме тивĕçрĕ. «Солнышко» ача сачĕн воспитательне Т.В. Львована тата Катькасри пуçламăш шкул–ача сачĕн воспитательне Н.Л. Ельмешкинана дипломсем парса палăртрĕç.

Конкурс тапхăрĕнче шкулсенчи директорсен воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕсем тата аслă вожатăйсем те хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç. Ку номинацире Мăн Сĕнтĕр шкулĕнчи директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумне Екатерина Ивановна Гунинана çитекенни пулмарĕ.

Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче вĕренекенсен илемлĕ ташши-юрри уява савăнăçпа чĕрĕлĕх сăнĕ парнелерĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Т. Ершова хăйĕн савăнăçне ĕçтешĕсемпе пĕрле пайлать.**

Вĕрентӳ

# Экзаменсем çывхарaççĕ

***Пĕрлехи патшалăх экзаменĕсем пуçланиччен вăхăт нумай юлмарĕ. Кăçалхи пĕрлехи патшалăх экзаменĕсем пирки калаçа пама район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалист-экспертне А. ЛЕСКИНАНА ыйтрăмăр:***

– Кăçал пурĕ 11 класс пĕтерне 287 выпускник пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене тытĕ. Паянхи кун тĕлне малтанхи çулсенче шкулсенчен вĕренсе тухнă 9 выпускник пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене тытма заявленисем çырса пачĕ. Вĕсен пурин те экзаменсене çапла йĕркепе тытмалла пулать: майăн 27-мĕшĕнче – информатикăпа ИКТ, биологипе тата литературăпа; майăн 31-мĕшĕнче – вырăс чĕлхипе; июнĕн 4-мĕшĕнче – ют чĕлхепе (акăлчан, француз, нимĕç тата испани чĕлхисем) тата хими предмечĕпе; июнĕн 7-мĕшĕнче – математикăпа; июнĕн 11-мĕшĕнче – историпе тата физикăпа; июнĕн 15-мĕшĕнче – обществознани тата географи предмечĕсемпе.

**– Шута илмелли сăлтавсене пула ача палăртнă кун экзамен тытма каяймарĕ пулсан?**

– Çак сроксенче шута илмелли сăлтавсене пула выпускник экзамен тытма пултараймарĕ пулсан, унăн экзаменсене тепĕр кун тытмалла. Июнĕн 17-мĕшĕнче – ют çĕршывсен чĕлхипе, обществознанипе, биологипе тата физикăпа; июнĕн 18-мĕшĕнче – географипе, химипе, литературăпа, историпе, информатикăпа ИКТ; июнĕн 19-мĕшĕнче – вырăс чĕлхипе; июнĕн 21-мĕшĕнче – математикăпа.

**– Пирĕн район территорийĕнче хăш экзаменсем тата ăçта иртĕç?**

– Вырăс чĕлхипе тата математикăпа экзаменсене районти икĕ шкулта – Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулсенче – ирттерме палăртнă. Ытти экзаменсене ăçта тытассине пĕлтерсе тăрăпăр. Вĕсене тытма район тулашне те каймалла пулать.

**– Экзаменсем мĕн вăхăт хушши пырĕç? Вĕсенче мĕнле хатĕрсемпе усă курма юрать?**

– Экзамен вăхăчĕ пирки калас пулсан вара, вăхăт мĕнле предмет пулнинчен килет. 4 сехет (240 минут) – математика, литература, информатикăпа ИКТ предмечĕсем чухне; 3 сехет çурă (210 минут) – физика, истори, обществознани предмечĕсемпе; 3 сехет (180 минут) – вырăс чĕлхипе, биологипе, географипе тата химипе; 160 минут – ют çĕршыв чĕлхипе. Пуçланасса вара экзаменсем Раççей Федерацийĕн пур субъектĕнче те вырăнти вăхăтпа 10 сехетре пуçланаççĕ.

Экзаменсем вăхăтĕнче математикăра линейкăпа çеç усă курма юрать, физикăра – линейкăпа, программăпа ĕçлемен калькуляторпа, химире – программăпа ĕçлемен калькуляторпа, географинче линейкăпа, транспортирпа тата асăннă йышши калькуляторпа усă курма ирĕк пур.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

«Парксен маршĕ» акци

# «Симĕсле шухăшла»

Çак ятпа иртрĕ апрелĕн 8-мĕшĕнче экологи агитбригадисен конкурсĕ. Вăл «Парксен маршĕ» акцин пĕр тапхăрĕ шутланать.

Районти 19 шкулти экологи агитбригадисем район администрацийĕн çурчĕ умĕнче çут çанталăка упрама хистесе çырнă каларăшлă плакатсемпе, ӳкерчĕксемпе пухăнчĕç. Вĕсене çут çанталăк тусĕсен йышне ӳстерме тата «симĕсле шухăшлама» чĕнсе район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ А.Е. Андреева саламларĕ. Вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ З.Ю. Дипломатова ачасем хутшăнмалли малашнехи ĕçсем çинчен аса илтерчĕ. Кусем вĕсем: йывăç лартасси, таврана тирпей-илем кĕртесси, вырăнсенче илемлĕ чечексем ешерччĕр тесе тăрăшасси тата кашни кун пурнăçламалли ытти нумай-нумай ĕç.

Муркашри Культура çуртне ачасем чăнах та маршпах утса çитрĕç. Унта вара хăйсен пултарулăхне сцена çинче кăтартса çут çанталăка сыхласси пуриншĕн те тĕп тĕллев пулнине çирĕппĕнех палăртрĕç. Конкурсра Шурча шкулĕнче вĕренекенсем çĕнтерчĕç.

Мартăн 12-мĕшĕнченех хăйĕн ĕçне пуçланă акци çитес кунсенчех вĕçленет. Унччен вара ачасен конкурссем татах пур-ха.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Спорт афиши

# 50 çултан иртнĕ арçынсене чĕнеççĕ

Апрелĕн 17-мĕшĕнче Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕн куçса çӳрекен кубокне çĕнсе илессишĕн волейболла выляссипе ăмăрту иртет.

Унта хутшăнма Муркаш районĕнчи предприятисемпе организацисен, учрежденисен тата ял тăрăхĕсен 50 çултан иртнĕ арçынсенчен тăракан командисене йыхравлаççĕ. Хутшăнакансен тĕп условийĕ – пирĕн районта тĕпленсе пурăнни е кунта ĕçлени. Çавăнпа та ăмăртăва хутшăнакансен хăйсемпе пĕрле личноçа çирĕплетсе паракан документа та илмелле. Çак условие пăхăнман командăсем, паллах, хăнана килнĕ командăсем пекех, конкурссăр майпа выляма пултарĕç.

Мала тухнă командăсене медальсем, дипломсемпе парнесем парса чыслĕç. Çĕнтерӳçĕ команда кубока тивĕçет. Чи лайăх выляканcене уйрăм номинацисенче палăртĕç, чи аслă çулхи вылякан та парнесĕр юлмĕ.

Ăмăрту Муркашри «Сывлăх» ФСК-ра 10 сехетре пуçланать. Çур сехет маларах шăпа яраççĕ.

**Хатĕрленӳ комитечĕ.**

# Сĕтел çи теннисла выляма

Апрелĕн 17-мĕшĕнче Муркашри спорт çуртĕнче сĕтел çи теннисĕпе ăмăрту иртет. Унта районти ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учрежденисен тата ял тăрăхĕсен командисене йыхравлаççĕ. Командăра 2 арçын тата 1 хĕрарăм пулмалла. Ăмăрту 10 сехетре пуçланать.

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

# Экскурсире

Чăваш Республикинчи наркоконтроль службин сотрудникĕсем «Çĕршыв ачисем – тивĕçлĕ ăру» автономиллĕ коммерциллĕ мар организаципе пĕрле Муркашри кадетсем валли чăннипех те пысăк парне хатĕрлесе пачĕç. Эпир, кадетсем, Хусан хулинче пулса куртăмăр. Тутарстан тĕп хулинчи паллă вырăнсемпе тĕплĕн паллашса хамăрăн тавракурăма татах та анлăлатрăмăр, аквапаркра та вăхăта савăнăçлă ирттертĕмĕр. Ку экскурси пирĕн вĕренӳшĕн тата активлă пурăнассишĕн хушма хавхалану выраннех пулчĕ.

**Е. АНТОНОВА.**

**4 пăрулана хĕрлĕ тĕслĕ ĕне пăрушĕпе (2 уйăхра) сутатăп. Уйкас Янасал ялĕ (с. Александровское), Павлова Таисия Филипповна. Тел.: 8-905-199-10-73.**

**Пĕлтерӳсем. Объявления**

**15 апреля в РДК с. Моргауши состоится концерт I республиканского конкурса молодых исполнителей чувашской эстрадной песни «Çĕнĕ ятсем». Начало – 18-00 часов. Цена билета: взрослый – 100 руб., детский – 70 руб. Тел.: 8-906-386-51-03.**

**Продаем ячмень. Тел.: 8-927-992-05-19.**

**Продаю семена чернушки и «штутгарден», лук. Цена договорная. Тел.: 8-903-358-82-34.** 5-5.

**16 апреля с 8-00 до 16-00 часов в районном Доме культуры состоится выставка-продажа обуви из натуральной кожи производства Ульяновской, Белорусской фабрик (весна – лето). Пенсионерам – скидки.**

**Вăкăрсем, пăрусем, сурăхсем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57.** 2-2.

**Продаю печи банные готовые и на заказ. Кровати деревянные (160х200 см). Тел.: 8-927-855-47-92.**

**Семена: ячменя («биос»), картофеля («удача», 6 т.), дешево. Тел.: 8-927-865-41-24.** 1-2.

**Виççĕ пăрулана хура ĕне сутатăп. Тел.: 68-3-65, 68-3-76, 8-927-865-77-22.**

**Моргаушский свадебный салон предлагает широкий выбор изысканных платьев и костюмов для невест и женихов по доступным ценам. Приглашает выпускников 2010 года за бальными платьями. Всем покупателям подарок – сувениры. Тел.: 63-0-78, 8-960-313-71-33.**

**Продается помещение (жилое) 99 кв. м. по ул. Центральная с. Акрамово, солнечная сторона, канализация, отопление, водопровод, подвал, за 450 тыс. руб. Тел.: 8-909-303-63-25.**

выдаем на выгодных условиях
ЗАЙМЫ
работаем с пайщиками
с.Моргауши, ул.Чапаева, 44а/2
6-23-10, 8 927 667-48-92
КПКГ “КАПИТАЛ”
выгодные % ставки
Св-во гос.рек. 21 № 001329502 от 26.05.04г.

**СРО (строители, проектировщики, изыскатели). Допуск к работам за 1 день. Сезонный допуск без компенсационного фонда. Требуются подрядчики. Контактный телефон: 8-950-016-44-93.** 1-4.

**Продаю новую двухкомнатную квартиру в кирпичном доме по ул. Парковая, площадью 50 кв. м. Имеются балкон, подвальное помещение, индивидуальное отопление. Тел.: 8-917-652-71-99.** 1-2.

**Май уйăхĕн пуçламăшĕнче виççĕмĕш хут пăруламалли хура тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-965-685-54-72.**

**Срочно продаю однокомнатную квартиру в с. Моргауши по ул. 50 лет Октября, общей площадью 25,1 кв. м. Недорого. Тел.: 8-927-854-63-03. Света.**

**Продаем цыплят бройлеров, несушек месячных и суточных, гусят, утят, комбикорм для птиц. Тел.: 8-909-304-18-21.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:050301:163, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большое Карачкино, ул. Центральная, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 2500 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**В объявлении о результатах аукциона на право заключения договора аренды земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района, опубликованного в газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 27 февраля 2010 года № 13 (7757), в место «19 октября 2009 года» следует читать «19 февраля 2010 года».**

ОГРН 305184129000010
СЛУХОВЫЕ АППАРАТЫ
от 4 500 до 12 000 руб.
цифровые от 7 800 до 12 000 р.
производства: Россия, Германия.
ультразвуковая стиральная машинка 1 800 р.
16 апреля с 12 до 13 часов в Районном Доме культуры
реклама
товар сертифицирован (3412) 51-03-68

приборы для ЗРЕНИЯ и ЗДОРОВЬЯ
лечебный аппарат “РЕТОН”
Остеохондроз, болезни суставов, травмы, ОРЗ 3 500 р.
прибор для улучшения зрения (тнп)
Рекомендуется при: катаракте, глаукоме, косоглазии, проходит резь в глазах, “мошки”, прекращаются головные боли, нормализуется внутриглазное давление. 4 500 р.
Приборы имеют противопоказания, проконсультироваться со специалистами.
Бальзам Панкова - 400 р.
16 апреля с 12 до 13 часов в Районном Доме культуры
товар сертифицирован
ОГРН 305184129000010
реклама
(3412) 51-03-68

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашии. Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00073 от 07 декабря 2009 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 13.04.2010 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3980.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.